# АННЕ ПЕК ТЕЛЕЙЛӖ ПУЛĂР!

***Кудрявцева Любовь Васильевна,***
*Шупашкарти 19-мӗш вăтам шкулта*
*чăваш чӗлхипе литературине вӗрентекен,*
*Раççей журналисчӗсен союзӗн членӗ*

Анне шăрши – çӗр çула.
(Г.Н. Волков этнопедагог)

Анне! Ачаш та çепӗç сăмах. Анне пурри – пуянлăх, телей, чун ăшши. Анне çинчен композиторсем юрă кӗвӗлеççӗ, çыравçăсем сăвă, калав, повесть шăрçалаççӗ. Чăваш амăшне хисеплесе Атăл хӗрринче палăк лартни ырă пулăм. Паллах, эпир унпа мăнаçланатпăр.

Эпӗ кирек хăш класра урок ирттернӗ чухне те Геннадий Никандрович Волков этнопедагог ӗçӗсенчи тӗслӗхсене, ваттисен сăмахӗсене, каларăшсене час-часах усă курма тăрăшатăп. Халăх сăмахне пухса пичетленӗ кӗнекери сăмахсем яланах чунра. Нумаях пулмасть хамăн класри ачасен ашшӗ-амăшӗ пухăвӗнче ăсчахăмăрăн «Анне пехилӗ» статьяна ятарласа пăхса тухрăмăр. Пӗр сехет çеç ларас тенӗччӗ, калаçу вара чылая пычӗ. Çак статья 2002 çулта «Халăх шкулӗ» журналăн 2-мӗш номерӗнче кун çути курнă. Статьяна вӗрентекенсемпе те сӳтсе яврăмăр: çӗнӗ шухăшсем, çӗнӗ туйăмсем çуратать вăл.

Пăхатăп та – хăш-пӗр ача хăйӗн ашшӗ-амăшне итлесшӗн мар. Унăн ашшӗ-амăшӗ темиçе ӗçре ӗçлет, ачине çынран кая хăварасшăн мар, пӗтӗм вăй-халне ачине парать. Паллах, ашшӗ-амăшӗ ачи ӳссе çитӗнсен те, ура çине тăрсан та хумханать. Çакăнта мӗнле аса илмӗн-ха Геннадий Никандрович хăйӗн амăшӗ пирки каланă сăмахсене: «… Шăп та лăп хăй çуралнă кун – пуш уйăхӗн 9-мӗшӗнче – анне пиртен уйрăлса кайрӗ. Тăхăр вун тăватта çитсен вилчӗ пулсан та, паянхи кун та çӗр çинчи анне çуккине ӗненес килмест. Хăй те куç умӗнчех, сасси – хăлхара, сăмахӗ те – чӗре варринче».

Ӗç – пурнăç тыткăчи. Паллах, авалтарах ӗçсем урăхларах пулнă. Паянхи кун ӗç шыракан нумай. Тен, ӗлӗк те ӗçсӗр пурăнма йывăр пулнă. Манăн темле пулсан та çитес ăрăва кахал ӳстерес килмест: ӗçлеччӗр, пуйччăр, керменсем хăпарччăр, чаплă машинасем туянччăр, анчах та ашшӗ-амăшне, тăван çӗр-шыва юрăхлă пулччăр. Тăван халăхшăн мӗн те пулин туни питӗ пархатарлă. Г.Н. Волков çырнă «Анне пехилӗ» статьяри йӗркесене вулакан патне çитересех тетӗп: «Кашни çынна тенӗ пекех пил сăмахӗ калатчӗ. «Ман пек телейлӗ пулăр…». Телейӗ мӗнре пулнă-ши аннен!? Кану мӗнне пӗлмесӗр ӗмӗрне ирттернӗ. Канас вырăнне ӗçне кăна улăштаратчӗ. Йывăр ӗçе вӗçлесен арлатчӗ, тӗрлетчӗ, çӗлетчӗ…çапла канатчӗ те – каллех йывăр ӗç тума пуçлатчӗ… Тӗртессе аннем тем тӗрлӗ те тӗртнӗ. Пир ячӗсене манса пӗтнӗ халь. Ретнелле, сиккӗлле, чăрăшла… Икӗ ăса хире-хирӗç чупнине курса ӳснӗ. Кăн-кăвак йӗпсемччӗ. Аннерен вара америксем те вӗренсе юлчӗç. Çăпата та пирӗн платформăлла пулнă, анчах ăна кӗпер, шакмак, кукăр тупан тенӗ. Кукаçей çăпатине те, платформине те хăйех тăватчӗ. Унран темле майпа италисем вӗренсе ӗлкӗрчӗç. Ку чухне пурте кукаçей ăсталăхӗнчен юлнă ată-пушмакпа

çӳреççӗ. Мăн куна яланах – çӗнӗ кӗпе, вӗр-çӗнӗ йӗм, шап-шурă чăлха, ылтăн тӗслӗ çăпата.

Кӗпи, кӗпи мӗнле хӳхӗм тата! Тӗртмелли çиппине асамат кӗперӗнчен арламан-ши? Темле… Анчах та аннеçӗм-аннем пӗлӗтпе çыхăннине сиснех ӗнтӗ, паллах. Сенкерпе хӗреслетсе хурапа уйăрнине – йӗлен тӗрри тетчӗç. Кӗпе аçлăкӗ – хăй пӗр философи… çӗр енлӗ кӗнеке çырмалла». …

Чăнах та ӗçе тӗрлӗрен тума пулать. Ахальтен мар чăваш апат-çимӗçӗ те тӗнчипе сарăлнă пирки Г.Н. Волков çапла асăнать: «…çиессе вара пицца çисе ӳснӗ. Пӗçернӗ çӗр улмирен нимӗр тӳнӗ – унта симӗс сухан, ăшаланă кантăр вăрри çăнăхӗ хушнă. Ку та çитмен-ха, услам çу янă та, кайран сӗрнӗ те. Çак тӗнче тутлăхне ыраш икерчӗ çине (пирӗн енчилле: ыраш капăртми) пӳрне хулăнăш сӗрсе хунă. Кайран вара италисем те ăса вӗренчӗç, тем тӗрлӗ пӳремеç те пӗçерекен пулчӗç – ятне пăсса ячӗç: пицца терӗç. Лавашӗ те чăвашранах пуçланса кайман-ши! Анчах хăпартăвӗ – тӗнчипе те хальлӗхе чăвашра кăна. Хуплу та, паллах. Эп хам ачаллах чустаран пӗр çирӗм тӗрлӗ апат хатӗрлерлеме пултарнă: йăва, йăвача, юсман, кульмак, кӳпертме (пăрçа çăнăхӗнчен кӳнӗ), капăртма. Пӗр вунă тӗрлӗ пашалу: йӳççи, пылакки, тутли, шултри, вӗтти, хулăнни, çӳхи, яки, чечекли, çавраки, тăрăхли, çăлтăрли чи тутли – хура тул çăнăхӗнчен».

Çапла чăваш çи-пуçӗ те, апат-çимӗçӗ те, кӗвви-çемми те, тӗрри-эрешӗ те тӗнчипе паллă. Хăй вăхăтӗнче, гунсем тапхăрӗнче, выльăх-чӗрлӗх ӗрчетессипе, çӗр ӗçӗпе тата йăла-йӗркепе çыхăннă сăмахсем Вăтаçӗр Азири, Европăри чӗлхесенче сарăлнă. Сăмахран, кăвар (кăвайт) – грузи чӗлхинчен, карта пуç – Германи чӗлхинчен, турăх – творог, вӗлле – улей – вырăс чӗлхинчен…

Хăш-пӗрисемшӗн мӗншӗн çав вак-тӗвек, ăçти-çук пек туйăнать-ши? Каллех Г.Н. Волков статйинчи йӗркесемпе усă куратăп: «Эп аннене аса илетӗп те – вăл мана чăваш халăх амăшӗ пек туйăнса каять. Пилпе, пехилпе çыхăнман пӗр япала та пулман иккен ун. Пирӗн кӗпе-йӗм, апат-çимӗç, савăт-сапа – чунлă тейӗн. Ырă кăмăл, пил-пехил чун кӗртеççӗ пулас. Çапла ман арăм, яла килсен, анне кӗпине тăхăнса ятатчӗ те – тӗлӗнсе, савăнса çӳретчӗ. «Пуç та ыратмасть, пилӗке те çăп-çăмăл, утнипе çеç çырлахасшăн мар, чупасшăн …».

Пӗррехинче эпӗ те çак йӗркесене вуланă хыççăн анне хăй аллипе эрешлесе çыхнă тутăрпа çăм нускине урамран шăнса кӗрсен тăхăнса ятăм та анне çупăрланă пекех туйăнчӗ – ăшă туйăм вăранчӗ, аннене аса илтӗм те ун патне шăнкăравларăм, тав сăмахӗ каларăм, ăна савăнтартăм,хам та чунтан савăнтăм. Тепрехинче, яла çитсен çул çинче ывăннине ирттерес тесе кукамайăн чăвашла çӗлетнӗ ик аркăллă кӗпине тăхăнса ятăм та атте-анне ӗçрен таврăниччен чупса çӳресе кил таврашри ӗçсене пур кăмăлтан ӗçлерӗм: çăкăр пӗçерсе кăлартăм, картишне шăлтăм, кӗтӳрен таврăннă выльăх-чӗрлӗхе картана хупрăм. Чăнах та хамăр тăван çи-пуç паха. Хисеплӗ ăсчахăмăрăн тепӗр тӗслӗхӗпе те усă куртăм: «…Анне тӗк таврашне хыттинчен иртсе-тасатса çӗнӗ минтер тăватчӗ. Ун çине пуçа хурса выртсан – пуç ыратни иртетчӗ. Иккӗленетӗр пулсан – пуçăрсене аннӗр минтерӗ çине хурса выртса пăхăр. Чăтмалла мар ыратни те иртет. Анне аннех çав.   Ăна çӳлти Турăпа танлаштарни – вырăнсăр мар пуль…». Чăнах та çапла. Анне минтерӗ çине пуçа хурсан ыратни те иртсе кайрӗ.

Эпир хулара чăваш çи-пўçĕпе çўреместпĕр, çапах та эпĕ обществăлла мероприятисене, тăван чĕлхен усă урокĕсене тата чăваш чĕлхи эрнинче авалтан упранса юлнă ĕлкеллĕ (фасонлă), Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕнчи, чăваш хĕрарăмĕн кĕпине тăхăнатăп та темле çăмăл пулса каять, çĕнĕ вăй кĕнĕ пек туйăнать, вĕренекенсем те уроксенче тимлĕрех ларaççĕ, ашшĕ-амăшĕ те çĕкленўллĕ кăмăлпа тепре тĕл пуличчен тесе сывпулашать. Шупашкар хулинчи чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕсен «Чăваш юрри-кĕвви илемĕ» лаборатори членĕсем валли ятарласа тăвансенчен хамăр енчи çи-пуçа пуçтарса хулана машинăпа парса яма ыйтрăм та, атте хаваспах çичĕ кĕпе, çичĕ саппун, çичĕ тĕрлĕ тĕрĕллĕ тутăр парса ячĕ. Каллех таврăнатăп Г.Н. Волков сăмахĕсем патне: «Эппин, ал вĕççĕн юратса тунă япалан пĕлĕтпе çыхăннă хăват пур. Халь ватăсем вилсен вĕсен кĕписене, ытти япалисене те пĕр-пĕр çырмара çунтарса ярaççĕ. Модăран тухнă ĕнтĕ…Çапла пуль…». Кунта çакна асăрхаттармалла, пирĕн чăвашсен пур çĕрте те вилнĕ чухнехи çи-пуçа, тўшек-минтере кил таврашĕнче хăвармаççĕ, ятарлă вырăна кайса пăрахаççĕ е çунтарса ярaççĕ. Ку ĕçе киремет вырăнĕнче тума юрамасть.

«Сирĕн авалхи кĕпе-йĕм, тумтир пулсан, парăр ăна шкулти музей валли. Пултăр вăл пирĕнпе юнашар!» – çырать Г.Н. Волков. Çак сăмахсене вулатăп та, темшĕн килĕшес килмест. Хăй вăхăтĕнче эпĕ те Елчĕк шкулĕнчи «Чăваш тĕпелĕ» музейне асатте-аттен вĕркĕçĕнчен пуçласа асанне-кукамай арчи-сĕтелĕ таранах парнелерĕм. Шкула хăнасем килсен çак япаласем çинчен хăпартланса каласа параттăмччĕ… Ку пўлĕмре пулса курнисен чăн-чăнах чăвашлăх туйăмĕ çуралнах. Кун пирки эпĕ пĕрре те иккĕленместĕп, мĕншĕн тесен пырса куракансем кайран хăйсен тăванĕсен япалисене музея парнелетчĕç. Çак япаласене тирпейлĕ упранисĕр пуçне тĕрлĕ уроксенче усă кураççĕ-ши халь? Çук пек туйăнать. Юнашарри юнашар пуль-ха та… Нивушлĕ чăваш халăхĕн культури музейра кăна пулмалла, нивушлĕ тăван халăх ăс-хакăлĕ, йăли-йĕрки пулас ăрусене куçмалла мар!? Капла эпир чăннипех те çухалма пултаратпăр. Сăмах май каласа хăварас килет, Шупашкара ĕçлеме куçрăм пулин те ман çумра чăваш кĕпи, тухьи, хушпăвĕ… Г.Н. Волков çапла çырать: «Чунне парса ĕçлет», – теççĕ чăвашсем лайăх çын çинчен». Эпĕ те лайăх çын пулас тесе тăрăшатăп: ачасене юрататăп, юратнă ĕçпе ĕçлетĕп, чăвашлăха упрас тесе кунран-кун чăвашла калаçатăп. Икĕ хĕрĕм те атте-анне тесе чĕнеççĕ, чăн чăвашла калаçаççĕ: асли чăваш халăх театрне çўрет, кĕçĕнни – колледжри фольклор ушкăнĕнче чăвашла юрăсем юрлать. Тăван яла çитсен кукамăшпе кукашшĕне хăйсен çитĕнĕвĕсемпе савăнтараççĕ.

Г.Н. Волков хăй те ашшĕ-амăшне юратнă, хисепленĕ, пуç тайнă: «Пĕр çул çеç вĕренкеленĕ пулсан та анне аслă турханла шухăшла-шухăшла ăслă калаçатчĕ. Анне чăваш ачисем чăвашла пĕлменнишĕн те пит хурланса калаçатчĕ. «Лайăх чăваш пуличчен ачасем начар вырăс та пулин пулсан лайăхрах теççĕ пулĕ», – тетчĕ. «Чăвашла вĕрентмесен ача ăсĕ хĕсĕнсе ача усал ўсет. Чăвашла вĕренмен чăваш ачин ăсĕ хĕсĕнсех пырать, имшерленет, мĕншĕн тесен çут çанталăк панă йăх программи, несĕллĕхĕ сўнет. Вара чăваш ачи тăван килĕнче усрав ывăл, усрав хĕр пуласа тăрать: тăван чĕлхесĕр тăван кил çук. Анне чĕлхисĕр çуратнă анне те ама çури. Чăвашла та вĕрентеймен-ши?

Чăвашлăхсăр ўснĕ ачасем ашшĕ-амăшне сума суми пулаççĕ. Чăн сăмах ку: анне чĕлхисĕр чăваш ачи ырă курас та, ырă тăвас та çук. Кама ырă кăтартĕ-ши çав мĕскĕнĕ?».

Сумлă этнопедагог хăйех çапла калать: «Чăвашлăхсăр çитĕннĕ ача чăваш пулаймасть. Ашшĕ-амăшĕ те ăна кирлĕ пулмĕ. Хальхи саманара хăш-пĕри ашшĕ-амăшне пуç тайма мар – укçа сăптăрма, вăхăт çитсен хваттер пайлама çеç кирлĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн вырăсла калаçакан ача ваттисен çуртне леçет… Ман шутпа, епле пулсан та ашшĕ-амăшĕ вăл ашшĕ-амăшех, вĕсем – Турă!

Пирĕн тăван халăх культуринче хиселлĕ çынсем халал çырса хăварас йăла йĕркеленсе кайрĕ. Кунта иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче И.Я. Яковлев çырса хăварнă халалĕ тĕп шăнăр пулса тăрать. Чăваш писателĕсем те çак пулăма манмаççĕ. Г.Н. Волков вĕрентўçĕ те чăваш халăхне халал парнелерĕ. Çак пултарулăхăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк, мĕншĕн тесен çынни çук, вăл урăх нимĕн те калаймасть, сăмахĕ вара чĕрере юлать. Çакна чунри ăш сăмахĕ вырăнне хуратăп тесе çырать Г.Н. Волков. «…Виличчен çичĕ çул маларах анне пехил хутне çырса хучĕ: «Пехил пурне те. Ку курăка эпĕ вилсен пуç айне хурăр. Сирĕн аннĕр. Каçарăр мана». Малтан çапла çырса хуни те çитет тенĕ пулмалла. Анчах та кăшт шухăшланă хыççăн пĕчĕк хучĕн тепĕр енне тата хушса çырса хунă: «Манăн упăшка енчен те, хам енчен те тăвансем нумай пулчĕç – пит лайăх пурăнтăмăр. Пурте каçарăр. Сывă пулăр. Чуп туса уйрăлатăп».

«Ман пек телейлĕ пулăр!» – анне пĕр вĕçĕмсĕр калакан çак пехиле хальтин ăнланма пулассăн туйăнать вăл çырни тăрăх» тесе вĕçлет пирĕн хисеплĕ çыннăмăр.

Чăнах та çапла каласа хăварма пултарни – Телей! Çак чун ăш сăмахĕсене вулакан та телейлĕ! Эпĕ çырма пултарни те Телей! Çĕр çинчи пурнăç кĕске, çапах та тем те курма пулать. Пирĕн ачасем те ырă ят хăварччăр, ашшĕ-амăшне сума суччăр, пуç тайччăр. Çакă ĕнтĕ вăл Г.Н. Волков халалне пурнăçлани.

«Анне пехилĕ» статьяна пĕрремĕш хут вуларăм та тĕлĕнтĕм, иккĕмĕш хут вуларăм та шухăша путрăм, виççĕмĕшĕнче – ĕмĕтлентĕм … Ваттисем каланă пек «Ĕмĕтленсен – пурнăçланатех». Çапла калас килет: «Яланах Анне пултăр!».

***Усă курнă литература:***


1. Васильева О. Тўрĕ те ырă чунлă пулма вĕрентеççĕ / О. Васильева // Хыпар. – 2006. – 18 кăрлач.

2. Васильев Е.В., Г.Н. Волков. Жизнь и педагогическая деятельность / Е.В. Васильев // Известия НАНИ ЧР. – 1997. – № 3. – С. 110-113.

3. Овчинникова К. Ăш пиллĕх тĕнчи / К. Овчинникова // Çамрăксен хаçачĕ. – 2003. – 10 кăрлач (№ 2). – С.4.

4. Волков Геннадий Никандрович. Ученые Чувашского государственного педагогического университета им. И.Я. Яковлева. – Чебоксары, 2005. – С. 66-67.

6. Кудрявцева, Л. Унăн чĕринче виçĕ юрату: [Геннадий Никандрович Волков академик 80 çул тултарнă тĕле] / Л. Кудрявцева // Елчĕк ен. – 2007. – 31 юпа (№ 126). – С. 3.